Шкулсенчи ĕçпе кану лагерĕсенче

# Симĕс утрав çинче

Эпир Ильинка шкулĕчи "Волжанка" кану лагерьне çӳрерĕмĕр. Лагерьти кунсем питĕ интереслĕ иртрĕç. Кашни кунах эпир вылярăмăр, кантăмăр, кăштах ĕçлерĕмĕр те.

Лагерь кунĕсенче çанталăк шăрăх тăчĕ. Хĕвел çинче хĕртĕнме те пулать, шыва кĕме те ăшă. Пĕр кунхине Атăл леш енне "Волжский эксклюзив" ятлă симĕс утрав çине экскурсие илсе кайрĕç. Унта эпир "Елена" яхтăпа каçрăмăр. Симĕс утрав çинче питĕ илемлĕ. Унта канмалли пӳрт, тĕрлĕ спорт вăйăсем вылямалли стадион, кăвайт çинче апат пĕçермелли, çимелли вырăн, çĕрле кăвайт чĕртмелли лаптăк пур. Шыв та Атăлта питĕ ăшă, тăрă. Утрав çинче пирĕнпе воспитательсем тĕрлĕ вăйăсем ирттерчĕç. Пире унта питĕ килĕшрĕ. Татах та каймалла пулсан, эпир савăнсах каятпăр.

"Волжский эксклюзив" утрав çинче кăна мар, пирĕн шкулти "Волжанка" лагерьте те питĕ лайăх. Мĕншĕн тесен эпир унта вăхăта усăллă ирттертĕмĕр, сывлăха çирĕплетрĕмĕр, тутлă апат çирĕмĕр.

Шел пулин те, кану лагерĕ вĕçленчĕ. Эпир çак кун лагерьшĕн каникул кунĕсенче питĕ тунсăхлăпăр, тепĕр çулхи лагерь кунĕсене кĕтме пуçлăпăр.

**В. ОГНЕВА.**

Ильинка шкулĕ.

# Лагерьте асра юлнă кун

Июнĕн 5-мĕшĕнче Атапай шкулĕнче "Хĕвел" канупа сывлăх лагерĕ ĕçлеме пуçларĕ. Лагере ертсе пыма, пирĕнпе ĕçлеме Ольга Николаевна Петровапа Маргарита Валерьевна Иванована шанса пачĕç. Пире лагерьте канма, сывлăха çирĕплетме вĕсем пулăшрĕç: пирĕнпе тĕрлĕ вăйăсем, конкурсем, викторинăсем ирттерчĕç. Пирĕншĕн кашни кун интереслĕ иртрĕ.

Уйрăмах июнĕн 27-мĕш кунĕ манăн асăмра юлчĕ. Вăл кун эпир, лагерьти ачасем, Шупашкар хулине канма кайма шут тытрăмăр. Малтанах хулана çитсен эпир тĕрлĕрен карусельсемпе ярăнтăмăр. Çав хушăрах унта шкул çумĕнчи лагерьсен фестивалĕн концертне куртăмăр. Кунпах пирĕн савăнăçлă кăмăл тулмарĕ, эпир Атăл хĕрне кайса унăн илемĕпе киленме шут тытрăмăр. Хамăр кану кунне "Сеспель" кинотеатрта вĕçлес терĕмĕр. Унта эпир "Лови волну" кино куртăмăр. Пире çак кун питĕ килĕшрĕ, яланлăхах асра юлчĕ.

**Елена КОЛБАСОВА.**

Атапай шкулĕ.

# Аса илмелли нумай

Акă ĕнтĕ Очăкасси шкулĕ çумĕнчи ĕçпе кану тата сывлăха çирĕплетмелли лагерь хăйĕн ĕçне вĕçлерĕ. 21 кун эпир, кану лагерьне килнĕ ача-пăча, спорт площадкине ирхи зарядкăна тухрăмăр. Хул-çурăма çемçетнĕ хыççăн столовăйра С.А. Соловьева пĕçернĕ тутлă апата çирĕмĕр. Тĕрлĕ вăйăсене, конкурссене, викторинăсене, эстафетăсене хаваспах хутшăнтăмăр. Шкул пахчинчи кишĕр, сухан, помидор, хăяр, купăста йăранĕсене çум курăкĕсенчен тасатсах тăтăмăр, шăвартăмăр. Асра юлмалли самантсем чылай пулчĕç пире валли.

Ытларах пире Шуршăла Космонавтика музейне кайни асра юлчĕ. Хаклă ентешĕмĕр А.Г. Николаев ачалăхне ирттернĕ çуртне те кĕрсе куртăмăр, вăл ларнă сак çине те ларса пăхрăмăр. Кайран анлă Атăл хĕрринчи залива курсан туйăмсем татах ытларах çĕкленсе кайрĕç. Тĕрлĕтĕрлĕ аттракционсенче пултăмăр тата катамаранпа ярăнтăмăр.

Çапла, сисĕнмесĕрех иртрĕç лагерьти хаваслă кунсем. Лагерь çăвĕпех ĕçленĕ пулсан татах та лайăхчĕ.

Пире кичем ан пултăр тесе тăрăшнăшăн тата кану лагерьне кăмăллă йĕркеленĕшĕн лагерь ертӳçине З.Т. Прокопьевана Н.Г. Романова, М.А. Белова, Р.Г. Степанова воспитательсене, шкул директорне Ф.А. Матвеевана тав сăмахĕ калатпăр.

**Лагере çӳрекенсем.**

# "Стройбат" ачисем çу кунĕсемпе кăмăллă

Москакасси шкулĕнчи "Стройбат" ятлă ачасен ĕç бригади 2001 çултанпа ырă ят çĕнсе илнĕ ĕнтĕ. Çак çулсем хушшинче Муркашри ĕçпе тивĕçтерекен центр урлă Москакасси тăрăхĕнчи çĕршер ача пушă вăхăтра укçа ĕçлесе илме пултарчĕ, тĕрлĕ ĕçе хăнăхрĕ. Алла мăлатукпа пăчкă тытма хăнăхрĕç. Карта-хуралтă юсама та, сĕтел-пуканпа партăсене сăн кĕртме вĕренчĕç.

Вăхăт малалла сиккипе шăвать. Акă ĕнтĕ июль уйăх варрине те çитрĕмĕр. Пирĕн шкулта вара кашни кунах ачасен хаваслă шавĕ илтĕнет. Кунта "Стройбат" строительство бригадин ачисем шкулти юсав ĕçĕсене пурнăçлаççĕ. Ачасемпе технологи учителĕ Ю.Ю. Иванов хăйĕн ĕçне чунтан парăнса, яваплăха туйса ĕçлет.

Шкулта çĕнĕ вĕренӳ çулне тĕплĕн хатĕрленни сисĕнет. Ачасен бригади юсав ĕçĕсене математика, физика, химии, ют чĕлхесен кабинетĕсенче пысăк пахалăхпа туса ирттернĕ те ĕнтĕ. Пĕрремĕш класс ачисене кĕтсе илме С.А. Купцован çĕнетнĕ класĕ те çĕнĕ партăсемпе илемленсе ларĕ. Чăваш чĕлхи кабинетне те тĕпрен юсанă çĕрте Ю. Егоров, А. Николаева, К. Григорьева. О. Смирнова, Т. Андреева, Н. Малькова, Е. Кондукторова ырми-канми ĕçлерĕç. Биологи кабинетне маччаран пуçласа урай таран çутатса лартрĕç. Кабинет заведующийĕ Р.В. Волкова Л. Романова, О. Трихалкина, И. Архипов, А. Кондукторов, А. Савельев чăн-чăн ăстаçăсем пекех ĕçленине кăмăллăн палăртрĕ. Халĕ çак кунсенче Е. Захаров, Н. Бочкин, С. Кондратьев, Ф. Кондукторов тата Н. Баранов шкул библиотекине те хаваслă, ĕçлес кăмăлпа килсе çитрĕç. Кунта вĕсем тĕрлĕ ĕç туса ирттерчĕç. Стенасене обой çыпăçтарчĕç, маччана йĕркене кĕртрĕç. Плинтусне те çĕнетрĕç, линолеума та юсарĕç. Çĕнĕ вĕренӳ çулĕ пуçланиччен ачасем Г.А. Тимофеева шкул библиотекарĕпе çутă та таса, хăтлă пӳлĕм пултăр тесе чылай тăрăшрĕç.

"Стройбат" ачисем каникула тухăçлă ирттернипе кăмăллă.

**Анна ЦАРЕВА.**

Москакасси шкулĕ.

Пултаруллă яш-кĕрĕм

# Çамрăксемшĕн ырă тĕслĕх

Юнкăпуçĕнче вырнаçнă "Хуçалăхсем хушшинчи "Моргаушская" строительство организацийĕ" хупă акционер обществи районта çеç мар, республикăра та ырă ята тивĕçнĕ. Нумай-нумай хутлă çурт çĕкленчĕ строительсен аллипе. Ĕçри çитĕнӳ ăна мĕнле йĕркелененче, ăста кадрсене суйласа илнинче, çамрăксемпе ĕçлеме пĕлнинче пулнине лайăх ăнланать МСО директорĕ В.В. Коротников.

Организацире хăйсен ĕçне ăнланса, чуна парса ĕçлекенсем нумай, вĕсенчен пĕри - нумай çул хушши мастерта вăй хуракан Алексей Владимирович Игнатьев.

Анчах шкул пĕтернĕ çамрăк хăйĕн ĕç биографине ун чухнехи МПМК ятлă пулнă çак предприятире рабочи пулса ĕçлеме тытăннипе пуçлать. Хастар çамрăк Совет Çарĕнче çĕршыв умĕнчи тивĕçе пурнăçланă хыççăн юратнă ĕçе малалла тăсать, тепĕр икĕ çултан каменщик специальноçне алла илет, ĕçлесе коллективра чыс та хисеп çĕнсе илет.

Предприяти директорĕ унăн тĕлĕнмелле пултарулăхне, коллективра ăна хисепленине, çамрăксем ун патне туртăннине асăрхать, Алексей Владимировича мастер ĕçне шанса парать.

Паянхи кунченех хĕрӳ чунлă мастер шанса панă ĕçе тивĕçлипех пурнăçлать, общество ĕçне те хастар хутшăнать, профком председателĕнче ĕçлет, кирек мĕнле ĕçрен те ютшăнмасть. Пĕр мероприяти те вăл хутшăнмасăр иртмест, çамрăксемпе те, ваттисемпе те пĕр чĕлхе тупать. Уйрăмах çамрăксемшĕн ырă тĕслĕх пулса тăрать: вĕсене хăйĕн пуян опычĕпе паллаштарать, кирлĕ пулсан - пулăшать.

Мастерта ĕçленипе пĕрлех 2007 çулхи апрелĕнчен тытăнса директорăн снабжени енĕпе ĕçлекен çумĕ пулса тăрăшать вăл.

Кăçал районта ирттернĕ "Çамраксен чи лайăх наставникĕ" конкурсра Алексей Владимирович çĕнтерӳçĕ пулса тăчĕ, ăна июнĕн 27-мĕшĕнче район центрĕнчи тĕп площадьре ирттернĕ çамрăксен "Королевская ночь" уявĕнче Муркаш райадминистрацийĕн вĕрентӳ, çамрăксен политики тата физкультурăпа спорт пайĕн дипломĕпе наградăларĕç. Пултаруллă наставник республика шайĕнче иртекен конкурса хутшăнма тивĕç пулчĕ. Эпир ăна ăнăçу сунатпăр.

**И. АНТОНОВА,**
**çамрăксен канашĕн председателĕ.**

**Сăн ӳкерчĕкре варринче А.В.Игнатьев.**

Семинар-канашлуран

# Комсомольски кооператорĕсен опычĕ

**(Вĕçĕ. Пуçл. 1-мĕш стр.).**

Кăçалхи пилĕк уйăх хушшинчи çитĕнӳсемпе хăпартланма пулать, ваккăн сутмалли тавар çаврăнăшĕ тата обществăлла апатлану 1458 миллион тенкĕпе (ӳсĕм 118,3%) танлашнă, продукци туса кăларассин калăпăшĕ 250 миллион тенке çити (104,6%) хăпарнă, хатĕрлев ĕçĕсен çаврăнăшĕ 154 миллион тенке (110,3%) çитнĕ. Кăçалхи пĕрремĕш кварталта кăна Чăвашпотребсоюз налуксемпе ытти тӳлевсем хывнă сумма 66 миллион тенкĕпе танлашнă. Çак кăтартусене пĕтĕмпех ĕнтĕ республикăри потребительсен кооперацийĕн ĕçченĕсем пĕр-пĕринпе килĕштерсе тата пĕлсе тăрăшнипе çĕнсе илнĕ. Çитĕнӳсенче комсомольскисен тӳпи пысăк.

Комсомольски райповĕпе илсен, çакна палăртсах хăвармалла. Кунта халăхран чĕртавар пуçтарассипе питĕ лайăх ĕçлесе пыраççĕ. Эмел курăкĕсем пухассипе, сăмахран, Комсомольскисем ытти районсенчи потребительсен обществисемшĕн ырă тĕслĕх пулса тăраççĕ. Чăвашпотребсоюз çулсерен патшалăха 300 тонна эмел курăкĕсем пуçтарса парать.

Культура министрĕ Петр Краснов палăртнă тăрăх, çакна тума виçĕ ен – Культура министерстви, Чăвашпотребсоюз канашĕ тата журналистсен союзĕ – пĕрле вырăна тухса ирттерекен канашлăвĕсем, потребительсен кооперацийĕн ĕçнехĕлне уçса паракан чи лайăх публикацисен конкурсĕсене ирттерни пулăшса пыраççĕ.

Петр Степанович пĕрле килĕштерсе ĕçлессине симĕс çул парассинче чи малтанах Чăвашпотребсоюз канашĕн ертӳçин Валерий Павловăн тӳпи тата "Чувашский потребительский союз" хаçат редакцийĕпе пĕрле уйрăмах пысăк пулнине палăртрĕ. Культура министрĕ Валерий Михайлович Павлова республикăри массăллă информаци хатĕрĕсемпе активлă хутшăнса ĕçленĕшĕн тата вĕсене тĕрек парсах тăнăшăн РФ Журналистсен союзĕн Хисеп грамотипе наградăларĕ.

"Пĕрлĕхлĕ Раççей" ("Единая Россия") политика партийĕн Чăваш Ен регионĕнчи уйрăмĕ "Чувашский потребительский союз" хаçата пысăка хурса хаклать. Редакци адресĕпе янă тав çырăвĕнче çапла йĕркесем пур: "Чувашский потребительский союз" хаçат 40 çул ĕнтĕ Чăваш Енĕн пиншер те пиншер кооператорĕсен сĕтелĕ çинчен каймасть. Вăл потребительсен кооперацийĕн малта пыракан паха опытне пропагандăлать, тăван республика аталанăвне Чăвашпотребсоюз ĕçченĕсем хывакан пысăк тӳпе çинчен каласа парать...". "Пĕрлĕхлĕ Раççей" политика партийĕн Чăваш Енри уйрăмĕ кăларса тăракан "С Единой Россией – Чувашия" тата Чăвашпотребсоюзăн "Чувашский потребительский союз" хаçачĕсем тахçантанпах ĕнтĕ пĕрле тухăçлăн çыхăнса ĕçлесе пыраççĕ. Çакăншăн "Пĕрлĕхлĕ Раççей" партин пирĕн регионти уйрăмĕн политканашĕн секретарĕн çумĕ Владимир Мидуков "Чувашский потребительский союз" хаçатăн тĕп редакторне Василий Сорокина Тав çырăвĕ пачĕ.

**С. БЫКОВА.**

Лайăх çынсем çинчен

# Хастарлăхĕпе палăрать

20-30 çул каяллахипе танлаштарсан, паянхи пурнăç çав тери нумай улшăнчĕ. Ăна вара кашни хăй пĕлнĕ пек хак парать: пĕрисем тиркеççĕ, теприсем мухтаççĕ. Тĕрĕссипе каласан, кашни харпăр хăй тăрăшмасан, вăй хурса ĕçлемесен нимĕн те пулмасть, пулас та çук. Çакна нумайăшĕ лайăх ăнланаççĕ, савăнпа та пурнăçра хăйсем çине кăна шанаççĕ.

Мухтав Турра, пирĕн хушăра çавăн пек çынсем ытларах. Вĕсенчен пĕри – Кашмаш ялĕнче çуралса ӳснĕ И.В. Майков. Игорь Викторович пурнăçра активлă позици йышăнакан çын. Вăл тĕрлĕ енлĕ аталаннă, ăшă кăмăллă, пултаруллă этем. Тĕрĕссипе каласан, Турри ăна нихăш енĕпе те кӳрентермен.

Игорь Викторович сăвăсем çырма питĕ ăста. Унăн сăввисем тăрăх чăваш композиторĕсем 20 ытла юрă кĕвĕленĕ. И. Майков унсăр пуçне музыкăна та çав тери юратать. Хут купăспа выляса тĕрлĕ конкурссенче вăл сахал мар малти вырăнсене йышăннă. Хăйĕн илемлĕ, вăйлă сассипе тĕрлĕ концертсенче çĕршер çыннăн чунне тыткăнланă. Сахал мар Хисеп грамотисем те унăн пултарулăхне çирĕплетеççĕ. И. Майков юрă-ташăпа ачаранах туслă пулнă. Халĕ те илемлĕ юррисемпе нумай çынна савăнтарать, вăл Кашмашри Культура çурчĕ çумĕнчи художество пултарулăх ушкăнне, Муркашри "Муркаш" халăх ансамбльне юрлама çӳрет.

Пурнăçра çынпа çын пек пулни, пĕр-пĕрне пулăшма тăрăшни çав тери пысăк пĕлтерĕшлĕ. Ырри каялла ырăпах таврăнать. Игорь Викторович – Раççей Федерацийĕн хисеплĕ донорĕ. Хăйĕн юнне парса вăл вуншар çынна вилĕмрен çăлнă.

Лайăх çынсене пурнăçра çăмăл мар пулин те, вĕсем хăйсем суйласа илнĕ çуллĕртен пăрăнмаççĕ. И. Майков пирки те çавнах каламалла. Хăйĕн ĕмĕрĕнче пурне те ырă сунакан, никама кӳрентермен çын чылай çул ĕнтĕ участокри милицин линийĕ енĕпе штатра тăман сотрудник пулса тăрать, хăйĕн тивĕçĕсене яланах тӳрĕ кăмăлпа пурнăçлать.

Муркаш районĕнче музыкăна чунтан парăннă çынсем, композиторсем те сахал мар. Ю. Жуков, М. Ягунов, В. Романов унă сăввисем тăрăх сахал мар юрăсем кĕвĕленĕ. Чăваш эстрада юрăçисем те унăн юррисене хăйсен репертуарне кĕртнĕ.

Игорь Викторович "Свобода" хуçалăхра чылай çул строитель пулса тăрăшать. Алли-ури пур енлĕн çыпăçнăран вăл халăхра те хисеплĕ.

Муркаш районĕнчи "Çĕнтерӳ ялавĕ" хаçатпа та И. Майков тахçантанпах туслă çыхăну тытать. Унăн сăввисем, пурнăçпа çыхăннă çивĕч ыйтусемпе çырнă статйисем вулакансен чунне хăйсен пырса тивеççĕ.

Сăмах май каласан, çак кунсенче вара Игорь Викторович хăйĕн çуралнă кунне паллă турĕ. Çав ятпа ăна çывăх тус-юлташĕсем, ĕçтешĕсем, "Муркаш" ансамбль тата редакци коллективĕсем ăшшăн саламлаççĕ, пурнăçра мĕн пур ыррине кăна сунаççĕ.

**А. ЧЕРНОВА.**

**Сăн ӳкерчĕкре: И. Майков черетлĕ концертра юрлать.**

## Çăлтăрсем

**Сăвви Игорь Майковăн Кĕвви Виталий Романовăн**




1. Лăпкă çурхи каçĕ
Урама чĕнет.
Çăлтăрсем çунаççĕ,
Уйăх хĕмленет.
**Хушса юрламалли:**
Çăлтăрсем, çăлтăрсем,
Ялкăшса çунсамăр
шуçăмччен.
Çăлтăрсем, çăлтăрсем,
Пит пире саваççĕ çамрăксем.

2. Чарăнсах шутлатпăр
Пĕр самант сире.
Тӳперен сăнатăр
Куç хĕссе пире.
**Хушса юрламалли.**

3. Тен кăшт ăмсанатăр
Яш-кĕрĕмсене
Е телей сунатăр
Кĕçĕр каç пире.
**Хушса юрламалли.**

4. Тупсăмне шыратпăр
Чунăм савнипе.
Куçран куç пăхатпăр
Çутă ĕмĕтпе.
**Хушса юрламалли.**